* * *

...Пăрунтан-шурунтан,
хушка хумунтан
хăтарăсăнччĕ...
Ĕлĕкхи кĕлĕрен

Хушка хум... Эп курăп ăна куçăн:
Урхамах пек чĕвен вăл тăрать,
Çилхине хирĕç çил салатуçăн
Шурă кăпăк татса кăтăрать.

Хушка хум... Сахал мар каснă пулĕ
Эс, чăваш, Атăла, тинĕсе.
Яланах хăтарман-тăр çав пӳлĕх,—
Тек кĕлту йăлăнса, тилмĕрсе.

Хушка хум йăвантарнă, пытарнă
Кимми́не, кĕсменне авăра.
Юлнисем макăрман: чун хытарнă
Çакăнта кăларма хамăра.

Хушка хум хушшипе, харсăр халăх,
Тухрăн эсĕ истори çулне.
Кимми́не карап пек аслатмалăх
Хăвату çитмелле ку чухне.

Хушка хум... Сăвăçсем тертленеççĕ
Сăн-сăпатлă сăмах йĕрлесе.
Эсĕ, халăхăм, эсĕ чĕлхеçĕ,
Шухăшлавçă, илемçĕ — эсех!



* * *

...От града белого,
от волны со звездою
спаси нас...
Из старинной молитвы.

«От волны со звездой...» — я воочью
Вижу яростно вздыбленный вал,
Вкось летящие пенные клочья,
Устрашающий белый оскал.

«От волны со звездой...» — знать, немало
Этих волн повстречал ты, чуваш,
Знать, молитва не всем помогала,
Не всегда вызволял и кураж.

Глядь, тем вздыбленным валом гремящим
Половину гребцов унесло...
Уцелевший на судне ледащем,
Дух крепя, налегал на весло.

Чтоб на стрежень истории ныне
Мы, наследники, выплыть смогли
И в любую волну без унынья
Новый ходкий корабль повели.

«От волны со звездой...» — поцветистей
Ищет слово присяжный певец.
Исполать *! Но куда сноровистей
Ты, народ мой, поэт и мудрец!

* Исполать (устар.) — хвала, слава.